Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945 НОЯБРЬ 2 ЭРНЕКУН 213 (6964) №

Хаçат 1918 çултанпа тухать. Хакĕ 20 пус.

Чăваш Коммуни

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Коммунистсемпе комсомолецсем! Хамăрăн социализмлă государствăн вăй-хăватне малалла тĕреклетессишĕн кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

(ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ ПУЛНĂРАНПА 28 ÇУЛ ÇИТНĔ ТĔЛЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕНЧЕН).

МАЛТА ПЫРАКАН ÇАМРĂКСЕНЕ — КОМСОМОЛ РЕТНЕ!

Комсомол организацийĕ—большевиксен партийĕн чи çывăх помощникĕ. Парти ертсе пынипе комсомол миллионшар çамрăксене пĕрлештерсе тăракан организаци пулса тăчĕ, вăл çамрăксене коммунистла воспитани паракан шкул, государствăпа хуçалăх ĕçĕн тĕрлĕ енĕсене вĕренсе пымалли шкул пулса тăчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче совет çамрăкĕсем хăйсен Тăван çĕршывĕн чăн-чăн патриочĕсем пулнине пĕтĕм тĕнче умĕнче уççăн кăтартса пачĕç. Çав хаяр кĕрешӳре пирĕн Ленинла-Сталинла комсомол нихăçан курман паттăрлăхпа çапăçрĕ, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан çамрăксем хушшинче чи малта пыраканнисен ретне тăчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче совет çамрăкĕсен пысăк йывăрлăхсем тӳсse irttеrme тивrĕ. Вăрçă кунĕсем совет çамрăкĕсен чăтăмлăхне тĕрĕслемелли кунсем пулса тăчĕç. Пирĕн совет çамрăкĕсем çав йывăр тĕрĕслӳ витĕр чыслăн тухрĕç. Пирĕн çамрăксем этемлĕх историйĕ ку тарана çитсе нихăçан курман паттăрлăх тата чăтăмлăх кăтартса пачĕç.

Фронтра та, тылра та комсомолецсемпе çамрăксем Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăнса кĕрешрĕç. Пирĕн çулпуçăмăр Сталин юлташ çамрăксен ĕçне пысăка хурса хакларĕ: «Фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи ĕçĕн тĕп йывăрлăхĕсене тӳссе ирттернĕ совет хĕрарăмĕсемпе пирĕн хастарлă çамрăксен нихăçан курман паттăрлăхĕ ĕмĕрлĕхех историе кĕрсе юлĕ», терĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче комсомол, вăл шутра комсомолăн чăваш организацийĕ те, хулари тата ялти малта пыракан ĕççамрăкĕсене хăйĕн ретне илсе чылай ӳссе пычĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем чылай ĕçсенче пуçарса пыракансем, ĕçĕн организаторĕсем пулчĕç.

Комсомол—çамрăксене ертсе пыраканĕ. Вăл производствăра та, колхозра та, массăсемпе таччăн çыхăнса тăрса, çамрăксене çул кăтартса пымалла, чи лайăх çамрăксене хăйĕн ретне илсе, куллен-кун ӳссе пымалла.

Комсомол ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай тата Пăрачкав районĕсем юлашки вăхăтра тăрăшса ĕçлеме пуçларĕç. Иртнĕ 3-мĕш кварталта, сăмахран, Пăрачкав районĕнчи комсомол организацийĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Богомолкина юлташ) çĕнĕрен 6 пуçламĕш организаци тунă, вĕсенчен 5 организацине колхозсенче организациленĕ. Чапаев ячĕпе тăракан, «За Родину», «Дружба» колхозсенче халĕ çĕнĕрен тунă комсомол организацийĕсем ĕçлеме пуçларĕç.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Н. Тихонов юлташ) çĕнĕрен 5 çĕрте комсомол организацийĕсем туса хунă. Вăл шута «Танкист», «Дружба», «Коммунар» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенчи пуçламĕш организацисем кĕреççĕ. Хăшпĕр районсенчи комсомол организацийĕсем учет ĕçне лайăхлатас, комсомол хуçалăхĕнче йĕрке тăвас тĕлĕшпе чылай тăрăшаççĕ.

Анчах та малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес ĕç комсомолăн республикăри организацийĕнче çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Иртнĕ виççĕмĕш кварталта (виçĕ уйăх хушшинче) пĕтĕм республикипе мĕнпурĕ те 1121 çынна кăна комсомол членне илнĕ. Сĕнтĕрвăрри, Калинино, Сĕнтĕр, Элĕк, Етĕрне, Çĕрпӳ районĕсем юлашки вăхăтра комсомол ретне çĕнĕ членсем илес ĕçе начарлатрĕç. Калинино районĕнче виççĕмĕш кварталта мĕнпурĕ те 20 çынна кăна комсомол ретне илнĕ, Етĕрне районĕнче çав вăхăт хушшинче — 15 çынна, Сĕнтĕр районĕнче—13 çынна, Çĕрпӳ районĕнче—13 çынна кăна члена илнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче вара августпа сентябрь уйăхĕсенче пĕр çынна та комсомол ретне илмен.

Виççĕмĕш кварталта производствăра ĕçлекен малта пыракан çамрăксене комсомола илесси уйрăмах япăхланчĕ. Соловьева юлташ ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлекен заводри организацире иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче комсомол членне 18 çынна, Коган юлташ ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлекен заводри организацире комсомола 35 çамрăка кăна илнĕ. Ку ĕçе çавăн пекех Куславккари, Çĕмĕрлери, Улатăрти предприятисенчи комсомол организацийĕсенче те кирлĕ пек туса пымаççĕ.

Колхозсенче малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес ĕç те çавăн пекех начар пулса пырать. Республикăри 962 колхозри пуçламĕш организацире виççĕмĕш кварталта пĕр çынна та комсомол членне илмен. Çак ĕç пуринчен ытла Калинино, Муркаш, Етĕрне районĕсенче япăх пырать. Калинино районĕнчи колхозсенче 54 пуçламĕш организаци шутланать пулсан, 50 организацире виççĕмĕш кварталта пĕр член та çĕнĕрен илмен. Муркаш районĕнчи колхозсенчи 55 организацирен 48 организацире пĕр член та çĕнĕрен илмен. Çавна пула ĕнтĕ республикăри 798 пуçламĕш организаци — сахал йышлă организацисем. Вĕсенче мĕнпурĕ те 3—5 член кăна шутланать.

Паллах ĕнтĕ, комсомола çĕнĕ членсем суйласа илес ĕç çакăн пек япăх пынипе ниепле те килĕшме çук. ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн, комсомол райкомĕсен, пуçламĕш организацисен çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлемелле, партин вырăнти организацийĕсен ку тĕлĕшпе комсомол организацийĕсене çителĕклĕ пулăшу памалла.

Çакна та асăрхаттарса хăварас пулать: комсомол ретне çĕнĕ членсем илесси—кампанипе тумалли ĕç мар. Вăл — куллен, тăтăшах туса пымалли ĕç. Малта пыракан çамрăксене комсомол организацийĕсен пулăшса пымалла, вĕсене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемелле.

Çамрăксен Коммунистла Союзĕ аслă Ленин ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Вăл ят — комсомолăн ялавĕ, чыслăхĕ, мухтавĕ пулса тăрать. Çакă вара Ленин идейисене пурнăçа кĕртессишĕн комсомолăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемеллине пĕлтерет.

Нумаях пулмасть Совет правительстви комсомола Ленин орденĕ парса наградăларĕ. Çав награда комсомол организацине çамрăксене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе тата лайăхрах ĕçлеме хушать. Комсомол организацийĕсен производствăри, колхозри, шкулсенчи, учреждениесенчи çамрăксемпе таччăн çыхăнса ĕçлемелле, вĕсене ертсе пымалла, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес енĕпе пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Хурамалти «Красный водник» колхозра Верховный Совета суйламалли Положение вĕренес ĕçе лайăх организациленĕ. Ку тĕлĕшпе кашни бригадăрах ятарласа уйăрнă агитаторсем ĕçлеççĕ, вĕсем колхозниксене суйлав Положенин виçĕ сыпăкне ăнлантарса панă.

Колхозниксен килĕсене суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе десятидворкăсем çине уйăрнă. Агитаторсенчен Патов тата Соловьева учительсем лайăх ĕçлеççĕ.

Агитколлектив руководителĕ Гладков юлташ колхозри çамрăксен пухăвĕнче «Совет демократийĕ çинчен» доклад туса пачĕ. Доклада сӳтсе-явас ĕçе çамрăксем активлăн хутшăнчĕç.

Районри судпа прокуратура сумĕнче суйлав Положенине вĕренме уйрăм кружок организациленĕ. Октябрĕн 29-мĕшĕнче кружокăн пĕрремĕш занятийĕ пулса иртнĕ. Кружока Сергеев юлташ ертсе пырать.

В. АНДРЕЕВ.

* * *

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Районри агитколлективсем суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анаткас-Маркари агитколлектив (руководителĕ А. Васильев юлташ) кашни вунă кил çумне пĕр агитатор çирĕплетнĕ. Васильев юлташ кашни эрнерех агитаторсене пухса суйлав Положенийĕ çинчен ăнлантарса парать. Çакăн хыççăн агитаторсем хăйсен участокĕсенчи суйлавçăсене ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем кунта халĕ суйлав системи çинчен калаçусем ирттерчĕç.

«Правда», «Красноармеец», «Новое Марково» колхозсенче актива суйлав Положенийĕ çинчен вĕрентме кружоксем организациленĕ. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ чылай ӳсрĕ. Асăннă колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлерĕç, государствăна тырă памалли хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртрĕç. «Правда» колхоз планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 100 центнер тырă пачĕ.

Мăкалри агитколлектив та (руководителĕ В. Томасова орденоносец) суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе активлăн хутшăнчĕ. Колхозниксене суйлав законĕ çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе Р. Томасова, С. Петров, М. Иванова, Л. Петрова, Е. Александрова агитаторсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ.

Кунти вулав çурчĕ суйлав çинчен тухнă кĕнекесемпе журналсене пухса уйрăм витрина организациленĕ.

Мамăшри, 1-мĕш Алинори, Тăрăнри, Кипечкассинчи агитколлективсем те ку тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА НОЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	плана тултарнă	Районсем	плана тултарнă
1. Вăрнар	106,9	16. Октябрьски	81.0
2. Етĕрне	95,2	17. Вăрмар	79.0
3. Сĕнтĕр	93,7	18. Куславкка	78.2
4. Красноармейски	92,9	19. Ишлей	77.7
5. Муркаш	92.4	20. Йĕпреç	77.3
6. Çĕрпӳ	92,0	21. Канаш	77.2
7. Советски	91,4	22. Комсомольски	75.8
8. Чурачăк	91.3	23. Улатăр	73.4
9. Шăхасан	91,3	24. Первомайски	72.7
10. Элĕк	90.6	25. Чкаловски	71.8
11. Сĕнтĕрвăрри	89.3	26. Хĕрлĕ Чутай	69.5
12. Шупашкар	88.3	27. Тăвай	65.1
13. Елчĕк	84.5	28. Çĕмĕрле	64.5
14. Калинино	84.4	29. Шăмăршă	59,4
15. Пăрачкав	84,1	30. Кувакино	46,5

Уяв тĕлне государствăна сĕт-çу парса татассишĕн

ИШЛЕЙ. Район государствăна сĕт-çу парас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 46 колхоз сĕт-çу памалли плана тултарнă, çак кунсенчех тата 20 колхоз сĕт-çу парса татать. Сĕт-çу парса татнă колхозсем халĕ государствăна планран ирттерсе сĕт сутаççĕ. «Красный Октябрь» колхоз 1.460 литр, «Красноармеец» колхоз 600 литр, «Большевик» колхоз 1.500 литр, «11 лет Чувашии» колхоз 400 литр сĕт сутнă. Сĕт-çу пухакан 28 сборщикран 11-шĕ хăйсен çулталăкри планне октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлнех тултарнă. Сборщиксенчен уйрăмах А. Школьников, Е. Чистякова, Е. Порфирьева, В. Сидорова тата Н. Мясникова юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен планне 104-136 процента çити тултарчĕç. Халĕ районри ĕççыннисем уяв тĕлне государствăна сĕт-çу пĕтĕмĕшпех парса татассишĕн тимлĕн ĕçлеççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Государствăна махорка параççĕ

ВĂРНАР. Районри колхозсем государствăна тырă, пахчаçимĕç, çĕрулми тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татнă хыççăн махорка пама тытăнчĕç.

Çĕрпелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн (председателĕ коммунист М. Шлыков юлташ) государствăна 150 центнер махорка памалла пулсан, вăл паянхи куна 60 центнер панă. Çавăн пекех «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз та 50 центнер махорка панă.

Государствăна махорка парас ĕçе Ворошилов тата Молотов ячĕсемпе тăракан, «Сутталла» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те лайăх йĕркеленĕ. Асăннă колхозсем Октябрь уявĕ тĕлне государствăна махорка памалли обязательствăна 100 процентчĕпех тултарассишĕн тăрăшаççĕ.

С. ПУДАКОВ.

ĔÇКУНĔСЕНЕ ĔÇ КĔНЕКИСЕМ ÇИНЕ ВĂХĂТРА ÇЫРСА ПЫМАÇÇĔ

ШĂХАСАН. Тимĕрчкассинчи «Красный луч» колхозра кăçал колхозниксен ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине çырса пыма пăрахнă. Ф. Бугалов, С. Архипов бригадирсем вара ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине çырса пыма мар, колхозри ĕçсене август уйăхĕнчепе те нарядсем çине лартса пымаççĕ. Кунта ĕçкунĕсем çухалнă тĕслĕхсем те час-часах курма пулать. Çакна пула колхозра ĕç дисциплини те япăхса кайнă. Колхозниксенчен çурри ытла ĕçе тухмаççĕ. Анчах та колхоз председателĕ Н. Егоров юлташ колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес вырăнне кашни кунах ĕçкĕре çӳрет. Çав вăхăтрах колхозра пур ĕçсем те кая юлса пыраççĕ. Колхоз государствăна тырă парса татман, кĕрхи çĕртме туса пĕтермен. Колхозра ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсем те час-часах пулаççĕ, анчах колхоза çирĕплетес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Г. СИРОТКИН.

НАЧАР ĔÇЛЕКЕН КОЛХОЗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Октябрь уйăхĕ ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтермелли татăклă уйăх пулчĕ. Анчах «Индустрия» колхоз государствăна 30 центнер тырă парса татман, авăн çапса пĕтермен. 1945 çулшăн колхоз государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç тата утă пĕр килограмм та паман. Выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕл каçарма хатĕрлесе çитермен.

УКÇА-ТЕНКĔ ПУХАС ТĔЛĔШПЕ ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМЕН ИЛНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ ПУРНĂÇЛАССИШĔН

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пуçарса яна Çĕрпӳпе Сентервăрри районĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсем октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне IV-мĕш кварталти финанс планне ялхуçалăх налогĕ пухас тĕлĕшпе 43,4 процент тултарчĕç. IV-мĕш кварталти финанс планне вĕсем ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне 60 процента çити тултарас пирки нимĕн те иккĕленмелле мар. Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри районĕ те финанс планне ăнăçлăн тултарса пырать. Кунта октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне IV-мĕш кварталти финанс планне 34,4 процент тултарнă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç ытти хăшпĕр районсенче те хăвăртланчĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне ялхуçалăх налогĕ пухас плана Советски район 33,2 процент, Вăрмар районĕ 28 процент, Чкаловски район 31,1 процент, Елчĕк районĕ 29,2 процент, Чурачăк районĕ 36,8 процент, Муркаш районĕ 27 процент тултарнă. Асăннă районсем çак çитĕнӳсене социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынипе тата финанс работникĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухнине пула тума пултарнă. Ку районсенче финанс органĕсене райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тата ял Совет исполкомĕсемпе колхоз правленийĕсем пысăк пулăшу парса пыраççĕ.

Анчах Йĕпреç, Куславкка, Калинино, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва ытла та çителĕксĕр организациленĕ.

Октябрь уявĕ çитеччен шутлă кунсем юлчĕç. Çавăнпа та пур финанс работникĕсен те, уйрăмах юлса пыракан районсенчи финанс работникĕсен, укçа-тенкĕ пухас ĕçре татăклă улшăнусем тумалла. Ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне кашни финанс работникĕн тата кашни районăн укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕн илнĕ обязательствăсене пĕр çăмахсăрах тултармалла.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

«ПĂШАЛЛĂ ÇЫН» ПЬЕСĂНА ЛАРТМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Чăваш АССР искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ драматург А. Кăлган Н. Погодинăн «Пăшаллă çын» ятлă пьесине чăвашла куçарса пĕтерчĕ. Пьесăна кăçал чăваш академи театрĕнче лартма хатĕрленеççĕ. Ленин рольне РСФСР тава тивĕçлĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев вылять.

СССР Совнаркомĕнче

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă: предприятисемпе учрежденисенче 1945 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнчи вырсарникун канмалли кун пулса тăрать пулсан, канмалли куна ноябрĕн 4-мĕшĕнчен ноябрĕн 6-мĕшне куçармалла. (ТАСС).

ВЦСПС-ра

ĔÇÇЫННИСЕН ЖАЛОБИСЕНЕ ПĂХСА ТУХАС ĔÇЕ ЛАЙĂХЛАТАССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС Президиумĕ рабочисемпе служащисен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕçе лайăхлатасси çинчен постановлени йышăннă.

Постановленире çакна палăртнă: профсоюз организацийĕсен хăйсем илнĕ пур жалобăсене те пите тимлĕн пăхса тухмалла. Профсоюзсен Центральный Комитечĕсен председателĕсем жалобăсене вăхăтра пăхса тухса тĕрĕс татса парассишĕн хăйсем ответ тытаççĕ. Центральный Комитетсен Президиумĕсен ларăвĕсенче ĕççыннисен заявленийĕсене пăхса тухас ĕç мĕнле пынине 10 кун хушшинче сӳтсе-явса çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле.

Профсоюзсен Центральный Комитечĕсен 1945 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче профсоюзсен республикăри, обласри, районри, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитечĕсенче ĕççыннисен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕç мĕнле пынине массăллăн тĕрĕслемелле, калашне вара профсоюз организацийĕсен çак паха ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе пымалла.

Профсоюзсен Центральный Комитечĕсен председателĕсен ĕççыннисен жалобисене пăхса тухма тата вĕсене тĕрĕс татса пама вырăнсене ответлă работниксем ямалла. Çак ĕçе тума профсоюз активне анлăн хутшăнтармалла.

ВЦСПС Президиумĕ профсоюз организацийĕсене жалобăсем çине формальнăй ответсем пама чарнă. Вĕсен кашни жалоба тăрăх татăклă та ăнланмалла ответ памалла. Профсоюз организацийĕсене жалобăсене çиелтен пăхса тухассине хирĕç татăклă кĕрешӳ пуçласа яма хушнă. Çавăн пекех тата рабочисемпе служащисене предприяти руководителĕсем, цех начальникĕсем, ОРС работникĕсем, столовăйсемпе магазин заведующийĕсем тимсĕррĕн пăхнине е кӳрентернине хирĕç кĕрешме хушнă. Профсоюз организацийĕсем хуçасăрла тата ытти тĕрлĕ киревсĕр ĕçсем тунин тĕслĕхĕсене тупсан, айăплисене ответ тыттармалла тăвас.

Совет çĕршывĕ тăрăх

МУСКАВ ОБЛАÇĔНЧИ УЯВ УМĔНХИ СУТУ-ИЛӲ

Мускав облаçĕнчи вырăнти суту-илӳ управленийĕ уяв умĕн суту-илӳ ĕçне организацилес ыйтăва сӳтсе-явма канашлу пухнă. Управлени начальникĕ Глинкин юлташ каланă тăрăх, халĕ магазинсене юсаса пĕтереççĕ. Пушкинăра, Звенигородра, Подольскинче тата Кунцевăра çĕнĕ магазинсем уçнă. Суту-илӳ организацийĕсен подсобнăй хуçалăхĕсенчи мĕнпур çĕрулмипе пахчаçимĕçе пухса хунă.

Уяв умĕн куллен кирлĕ таварсем — савăт-сапа, трикотаж, урана тăхăнмалли япаласем ытларах сутма тытăнаççĕ. Чи лайăх таварсене Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсем валли, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем валли тата вăрçăра вилнĕ воинсен ачи-пăчисем валли уйăрса параççĕ. Вĕсене 100.000 парне—апатçимĕç, мануфактура, тĕрлĕрен тăхăнмалли япаласемпе урана тăхăнмалли япаласем параççĕ. (ТАСС)

ГЕРМАНИ ЧУРАЛĂХĔНЧЕН КИЛЕ ТАВРĂННИСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Тула облаçĕнчи Белев районĕнче нимĕç чуралăхĕнчен киле таврăннă совет гражданĕсемшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Вĕсене валли 500 çурт туса панă. Çав çуртсене 3.000 çынна ытла вырнаçтарнă. Кунсăр пуçне, киле таврăннисене укçа, тырă, çĕрулмипе пахчаçимĕç нумай парса пулăшнă. Вĕсене 800 ĕнепе пăру, 2.000 чăх-чĕп панă.

ИНСЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ВОИНСЕНЕ 100 ТОННА ПАНУЛМИ ЯРСА ПАРАÇÇĔ

Харьков облаçĕнчи «Глобовский сад» совхоз Инсетри Хĕвелтухăçĕнчи воинсене Октябрь уявĕ тĕлне 100 тонна панулми парне ярса парать.

Ӳкерчĕк çинче: Киев хулинчи Крещатик урамĕн юсаса пĕтернĕ пайĕ. Н. СОЛОВЬЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ХАРЬКОВ ХУЛИ 300 ÇУЛ ТУЛТАРАТЬ

ХАРЬКОВ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). 1946 çулта Харьков хули 300 çул тултарать. Истори музейĕнче хула юбилейĕ ячĕпе пысăк выставка хатĕрлеççĕ. Выставкăра 5 пысăк уйрăм пулать. Çав выставка авалхи Харькова кăтартса парать, граждан вăрçи вăхăтĕнчи Харьков çинчен каласа парать, индустриллĕ çĕнĕ Харькова кăтартать.

Музейĕн научнăй работникĕсем историллĕ документсем, çырусем, фотоӳкерчĕксем, картинăсем тата ытти тĕрлĕ экспонатсем пухаççĕ. Авалхи фотоӳкерчĕксем тăрăх 1655—1656 çулсенче тунă пĕрремĕш Харьков крепоçĕн макетне туса лартаççĕ. Çав крепоçăн пĕр пайĕ, уйрăм плсе, вăхăтран Покровски чиркӳ тата пĕр чул çурт, халиччененех сыхланса юлнă. Крепоçри тупăсем те сыхланса юлнă.

Харьков историйĕ питĕ интереслă. 1709 çулта шведсемпе Полтава хули патĕнче çапăçнă вăхăтра Харьков обороннине çирĕплетме унта 1-мĕш Петр пырса кайнă. Хулари темиçе çурт Харьковра Суворов пурăннипе, поэт К. Рылеев декабрист тата ытти çынсем пурăннипе çыхăнса тăраççĕ.

1900 çулта Харьковра рабочисен пĕрремĕш маевкисем пулса иртнĕ. В. И. Ленин «Май кунĕсем Харьковра» ятлă статьяра Харьковри рабочисен политикăлла кĕрешĕвне пысăк хака хунă.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче Харьков хули пирĕн çĕршыври индустриллĕ чи пысăк центрсенчен пĕри пулса тăчĕ.

М. В. ФРУНЗЕ МУЗЕЙĔ

ИРКУТСК, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Иркутскран 200 километртра Манзурка ялĕнче патша вăхăтĕнче М. В. Фрунзе ссылкăра пурăннă. Вăл пурăннă çуртра халĕ музей организациленĕ. Ял çыннисем Михаил Васильевича питĕ хисеплесе асăнаççĕ. Вăл вилни 20 çул тултарнине асăнса палăртнă май, ялти старикĕсем çамрăксене большевиксен партийĕн мухтавлă ывăлĕ çинчен каласа параççĕ.

М. В. Фрунзе музейĕ Якутск хулине каякан çул хĕрринчех ларать. Унта час-часах машинăсем чарăнса тăраççĕ. Инçетри çурçĕртен, Лена тăрăхĕнчи ылттăн тупакан вырăнсенчен, Якутскран, Иркутскран килекен çĕршер çын çав музея кĕрсе кураççĕ. Кунта М. В. Фрунзен сăнӳкерчĕкĕсемпе докуменчĕсем тата вăл ĕçленĕ столяр станокĕ пур.

КАЗАХСТАНРИ ЧИ ЛАЙĂХ КОМБАЙН АГРЕГАЧĔ

Караганда облаçĕнчи Ударная МТС-ри комбайн агрегачĕн начальникĕ М. Макеев пĕр трактортан икĕ «Сталинец» комбайн кăкарса кăçал 2.758 гектар тырă вырса пухса ăмăртура мала тухнă. Макеев бригадине хушса тӳлемелли йĕркепе 12.000 тенкĕ укçа тата 100 пăт яхăн тырă çырса панă.

ÇАР ÇЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕМ ВАЛЛИ 99.559 ÇУРТ ЛАРТНА

Чернигов облаçĕнче çар çыннисен çемьисем валли 2.882 çурт çĕнĕрен тунă, халĕ татах 687 çурт тăваççĕ. Украинăн ытти облаçĕсенче те çар çыннисен çемьисем валли çуртсем тăваççĕ. Украинăра пĕтĕмпе 99.559 çурт тунă е юсанă. Çак çуртсен ытларах пайне колхозсем хăйсем тунă.

Потребкооперацин суту-илÿ ĕçне аталантарасси

(ЦЕНТРОСОЮЗ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔПЕ Н. П. СИДОРОВПА КАЛАÇНИ)

Мирлĕ вăхăтра потребкоопераци умне питĕ паха задачăсем тухса тăчĕç. Вĕсенчен чи пахаррахи вăл—колхозниксемпе ялти интеллигенци ыйтăвĕсене туллинрех те лайăхрах тивĕçтерессси пулса тăрать.

Вак-тĕвек суту-илÿ ĕçне организацилес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тумалла. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем потребкооперацин предприятийĕсене 40 процент ытла аркатса хăварнă. Нимĕçсем оккупациленĕ районсенче халĕ 37.000 суту-илÿ предприятине юсанă е çĕнĕрен тунă, тата 30.000 магазинпа лавка уçмалла.

Потребкооперацин задачи вăл—яла ытларах тавар илсе килесси пулать. Ку тĕлĕшпе потребкоопераци системинчи работникĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха, вĕсем вырăнти промышленноçпа промкооперацирен кирлĕ таран тавар илсе тăраймаççĕ. СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи августăн 22-мĕшĕнче куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă постановлени вырăнти чĕртаварпа тата промышленность отхочĕсенчен ытларах продукци туса кăларма çĕнĕ майсем уçса парать.

Потребкооперацин облаçсем хушшинчи суту-илÿве ытларах сарса пымалла. Пĕр-пĕр облаçра хăшпĕр таварсене нумай туса кăларма пултараççĕ, çав таварсене вара урăх облаçа парса унтан ытти таварсене илсе килмелле.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем аркатса хăварнă районсенчи колхоз строительствине пулăшас ĕç те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Центросоюз енĕпе колхозсемпе колхозниксене строительство материалĕсем сутма 236 магазин уçнă. Çавăн пекех Украинăпа Белорусси ССР-сенче те çавăн пек магазинсем уçнă.

Потребкооперацисен обществăллă апатлану предприятийĕсем 12.000 ытларах пур. Хатĕрлев пункчĕсенче 3.988 чайнăй, столовăй тата буфет пур, вăл шутра 818 чайнăйпа кĕрсе выртмалли çуртсем те пур. 1945 — 1946 çулсенче татах 4.500 чайнăй уçмалла. Çав чайнăйсене лайăх оборудовани тупса парас тесе, унта çÿрекенсем вăхăта культурăллă ирттерме пултарччăр тесе, тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. (ТАСС)

Ялти çамрăксене—ФЗО шкулне

Октябрĕн 15-мĕшĕнче ялти çамрăксене ремесло училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене илес ĕç пуçланчĕ. Çак шкулсене Элĕк районĕн пурĕ 45 ача вĕренме ямалла. Ку тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ ял Совет председателĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Халĕ призыв комиссийĕ ачасене шкула вĕренме илме тытăнчĕ. Чылай çамрăксем ФЗО шкулĕсене вĕренме кĕме хăйсен ирĕкĕпех заявлени параççĕ. Шарынка ял Советĕнчен 6 ача хăйсен ирĕкĕпе заявлени панă. Ку ял Советĕнчен пынă Алексей Ефремов комиссире:

— Манăн пĕр-пĕр квалификаци илсе, заводра ĕçлес килет. Çавăнпа эпĕ ФЗО шкулне вĕренме илме ыйтатăп, — терĕ.

Паянхи куна районĕпе 45 çамрăка вĕренме илнĕ. ФЗО шкулĕсене вĕренме каякан ачасене районри колхозсем тумтирсемпе апат-çимĕç парса пулăшаççĕ. Тури Выл ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз Колокольцевпа Ермаков çамрăксене вĕр-çĕнĕ пальто, ботинка, çăмата, гимнастерка, шаравар, алшăлли, çĕлĕк илсе панă. Кунсăр пуçне вĕсене кашнинех 3-шер пăт тулă тата 100-шер тенкĕ укçа парса пулăшнă.

Хăшпĕр колхозсем вĕренме каякансене пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Кĕçĕн Тукташри «Сунтал» колхоз ФЗО шкулне вĕренме каякан Леонид Андреева пулăшма мар, станцăна çитме те лав парса яман. Крымзарайка ял Совет исполкомĕн секретарĕ Александров юлташ вĕренме каякансем лав ыйтма пырсан:

— Мĕн лавĕ сире, кутамкка йăтма пултаратăр, тухăр та утăр!—тенĕ.

Вĕренме илнĕ 45 ачаран Шупашкарти 11-мĕш ФЗО шкулне Элĕк районĕнчен 35 ача килнĕ. Октябрĕн 28-мĕшĕнче кунта вĕренме илнĕ ачасен пухăвĕ пулнă. Пухура Шарынка ял Советĕнчен килнĕ Михаил Семенов çапла каланă:

— Манăн токарь пулас килет. Эпĕ пур предметсемпе те лайăх вĕренме пулăтăп,—тенĕ.

Ф. КАТЕЕВ.

ПĔТĔ КĔСРЕСЕНЕ ЛАЙĂХРАХ ПĂХАР

ЙĔПРЕÇ. «МОПР» колхозри 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăри конюхсем лашасене тăрăшса пăхаççĕ. Çавна пула ку бригадăсенчи лашасем пурте сывă та самăр. 3-мĕш бригадăри конюхсенчен уйрăмах А. Федоров юлташ лайăх ĕçленине палăртмалла. Иртнĕ çул вăл 5 кĕсререн 5 тиха илсе ÿстерчĕ. Халь Федоров юлташ пурĕ 11 тиха пăхать, тихасем пурте сывă ÿсеççĕ. Лашасене лайăх пăхнăшăн колхоз правлени Федоров юлташа ĕçшĕн хушса памалли йĕркепе пĕр центнер тырă пачĕ. Кăçал та Федоров хăй пăхакан кĕсресене вăхăтра чуптарса хăварнă, вĕсене вăл халĕ уйрăмах тăрăшса пăхать.

Анчах 1-мĕшпе 2-мĕш бригадăсенче вара ĕç пĕтĕмпех урăхла. Александровпа Лаврентьев конюхсем лашасене çав тери япăх пăхаççĕ. Лашасене вăхăтра апат памаççĕ, витесене те вăхăтра тасатса тăмаççĕ. Лашасем час-часах уя тухса кайса тырра ватаççĕ. Кунта пĕтĕ кĕсресене те ытти лашасемпе пĕрлех ĕçлеттереççĕ. 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Земскова юлташ «Маруська» ятлă кĕсрене кашни кун тенĕ пекех 3-шер центнер тиесе çÿреттернĕ, хăшпĕр кунсенче вăл лашапа 2-шер хут та кайса килнĕ. Çавăн пек йывăр ĕçлеттернине пула кĕсре çул çинчех хăм пăрахнă. Çав вăхăтрах ĕçе вĕрентнĕ вăкăр ахалех витере тăнă. Лаврентьев конюх пăхакан «Моторка» кĕсрене П. Григорьев колхозник çÿререн таврăннă чух хытă чуптарнă. Çавна пула кĕсре çав каçах хăм пăрахнă. Анчах правлени Григорьев колхозника ку тарана çитсе те ответ тыттарман. Çапла пĕтĕ кĕсресем çине тимсĕррĕн пăхнă пирки Лаврентьев пăхакан 2 кĕсре, Александров пăхакан 1 кĕсре хăм пăрахнă.

Кĕсресене хăм пăрахасран сыхласси зоотехниксенчен те нумай килет. Районри зоотехниксем ку тарана çитсе те «Сохранное свидетельство» парассине йĕркелемен.

Кĕсресем хăм пăрахнă тĕслĕхсем районри ытти колхозсенче те пур. «Красный водник» колхозра 2 кĕсре, «Большевик» колхозра 1 кĕсре хăм пăрахнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çакăн пек тимсĕррĕн ĕçлессине пĕтермелле.

П. КУРАКОВ.

ТЕАТР ФИЛИАЛĔН ПАРНИ

Калининăри театр филиалĕ Октябрь уявĕ тĕлне Н. В. Гоголĕн «Авлану» пьесине лартма хатĕрленет. Пьесăна Н. С. Айзман драматург режиссер пулса ертсе пырать.

Филиал пьесăна чи малтан уяв кунĕнче Калининăра лартать, унтан районри колхозсене тухса каять.

Пĕчĕк фельетон

Çухалнă шкул...

Шăхасан районĕнчи «Заря» колхоз колхозникĕсем кăнтăр кунĕнчех шкул çурчĕ çухалнишĕн паян кун та пăшăрханса пурăнаççĕ.

1944 çулхи çуркунне Чурачăк райсовет исполкомĕн председателĕ И. А. Скворцов юлташ Тури Сурăм ялне пырать (ун чухне çак ял Шăхасан районĕнче мар, Чурачăк районĕнче пулнă). Пырать те çапла Скворцов юлташ, колхоз председательне чĕнтерет.

— Çапла-çапла,—тет вăл председателе,—эпир сирĕн ялта квас заводĕ тума шутлатпăр.

— Мĕнле квас заводĕ? — тĕлĕнсе каять колхоз председателĕ.

— Ара, чипер заводах,—тет Скворцов.—Ĕçмелли квас эппин. Питĕ лайăх вĕт вăл çуллахи шăрăхра. Сире те сиен пулмасть, — колхозри выльăх валли браха пулать. Сирĕн вăрман пур, вуттăнкă енчен аван. Савăнас пулать кунăн сирĕн, çапла-и?

— Ăçта тăвас вара ăна? Пирĕн ун валли çурт çук вĕт...

— Ма çук-вара? Шутла-ха, сирĕн ялта пуçламĕш шкул пур вĕт. Çав шкулта тăватпăр.

Кăна илтсен колхоз председателĕ тĕлĕнсе каять.

— Шкулта тетĕр?—ыйтать вăл ĕненмесĕр.—Ара, пирĕн мĕртен пĕр шкул анчах вĕт! Ачасене ăçта вĕрентес?

Скворцов хăйĕннех çаптарать:

— Уншăн ан хăрăр,—тет вăл,—квас заводне эпир эппин... вăхăтлăха... вĕренÿ çулĕ пуçланиччен çес тăвапăр. Кайран вара... куç курĕ унта...

— Çапах та,—тет колхоз председателĕ,—эпĕ татса параймастăп ку ыйтăва. Шкулпа эпĕ хуçа мар-çке, унпа пирĕн халăх хуçа.

— Э-эй, мĕн халăххи кирлĕ унта? Правлени членĕсене пухас та — йышăнас. Пулчĕ те. Астăвăр, вăхăтлăха анчах вĕт вăл...

Мĕн тăвас тен, колхоз председателĕн райсовет исполкомĕн председательне пăхăнас пулать вĕт!

Пухăççĕ те вара 4—5 çын, лару туса ирттереççĕ. Вăл ларура пуçламĕш шкул çуртне квас заводĕ валли пама йышăнаççĕ. Анчах ку ларура ни ял Совет исполкомĕн председателĕ, ни шкул заведующийĕ пулмаççĕ.

Çакна ĕнтĕ колхозниксем сисеççĕ те, çав тери пăшăрханса ÿкеççĕ. Вĕсем колхоз председателĕ патне пырса, ăна ятлаçса пĕтереççĕ.

— Ăсран тухрăр-и эсир,—теççĕ вĕсем,—шкул вĕт ку пирĕн, шкул! Ытти çурт пулсан татахчĕ хăть. Эпир ун çинчен ĕлĕкренпех ĕмĕтленнĕ. Халĕ сиче тăрса туса лартрăмăр та, каллех ишсе парахас-и? Районă мар, кукшăн Шупашкара кайса пăхмалла...

Шкул çуртне мĕнле те пулсан хăйсенчех хăварас тесе калаçса пăхма Чурачăк райкомне ятарласах çын уйăрса яраççĕ. Анчах та Чурачăк райкомĕн секретарĕ пулнă Артемьев ăна тĕмĕн тĕрлĕ ятласа ярать.

— Сирĕнтен ыйтмаççĕ ăна!—тет Артемьев.—Эпир хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр.

Çак вăхăт тĕлнелле хайхи Тури Сурăм ялне Чурачăк районĕнчен каллех Шăхасан районне куçармалла туни çинчен РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тухать. Çакна илтсен, Артемьевпа Скворцов пушшех хыпса ÿкеççĕ. Колхозниксем тем тĕрлĕ тархасласа ыйтнине пăхмасăрах, виçĕ пÿлĕмлĕ, икĕ класлă шкул çуртне вĕсем Чурачăка куçарса каяççĕ. Çапла вара «Заря» колхозри шкул çурчĕ кăнтăр кунĕнчех çухалать.

— Ан пăшăрханăр,—теççĕ чурачăксем,—сире эпир униăн укçа тÿлĕпĕр. Тепĕр шкул лартма пултаратăр вĕт эсир!..

Шкула куçарса кайнăран вара çулталăк ытла иртрĕ. Анчах «Заря» колхоз колхозникĕсем шкул укçине паян кун та илеймеççĕ. Çитменнине тата, турттарса кайнă çав шкулпа чурачăксем те усă курайман, ăна вутă туса çунтарса янă.

«Заря» колхозра халĕ квас заводĕ те çук, шкул çуртне те турттарса кайнă. Унăн вырăнĕнче халĕ хыт-хурана армути çеç кашласа ÿсет.

— Кам ăс-тăн кĕртĕ-ши пирĕн шкул çуртне турттарса каякан çынсене?—шухăшлаççĕ колхозниксем шкул ларнă вырăн çинелле пăхса.

Чăнахах та, ку ĕсне кам калĕ-ши юлашки татăклă сăмаха?

Степан АСЛАН.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕ уçăлнă

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 29-мĕшĕнче, Лондонри Альберт-хольте пысăк митинг туса, Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине уçнă. Митингра 5.000 çын ытла пулнă. Митинга пухăннă халăх 64 çĕршывран килнĕ делегацисене ăшшăн йышăннă. Делегацисем зал витĕр хăйсен наци флагĕсене çĕклесе иртнĕ.

Митинг председателĕ сăмах каланă хыççăн, пухăннă халăх умĕнче Англин суту-илÿ министрĕ Стаффорд Крипс сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Тĕнчери çамрăксем умĕнче нумай çулсем хушши активлăн ĕçлесси тăрать, çавăнпа та тĕнчери çамрăксен малалли пурнăçа мĕнле тăвасси çинчен хăйсен шухăшĕсене кăтартса пама хăтланса пăхмалла».

Конференци ячĕпе Англи королĕнчен VI-мĕш Георгран, Трумэнран, Эттлиран, Бевинран, Стеттиниусран, Ван Ши-цзерен тата Кафтановран килнĕ саламлă телеграммăсене вуласа панă.

Музыкантсен ассоциацийĕнче тăракан рабочисен хорĕ, Алан Буш ертсе пынипе, Англи, Китай, Югослави тата Совет юррисене юрласа панă. Митинга пухăннă çамрăксем пурте хавасăн тупа тунă. Зала пухăннă темиçе пин çамрăк хыттăн çапла каланă: «Эпир пĕтĕм тĕнчери çамрăксен пĕрлĕхне туса хума пулатпăр, унта мĕнпур расăсен, мĕнпур тĕслĕ халăхсен, мĕнпур национальноçсен, мĕнпур тĕнсен çамракĕсем пулĕç; çак пĕрлĕхе эпир çĕр çинчи фашизмăн мĕнпур йĕрĕ-тымарне пĕтерсе лартмашкăн, тĕнчери халăхсем хушшинче çирĕп туслăх туса хумашкăн тăвапăр», тенĕ.

Митинг хупăнас умĕн Совет Союзĕн, Китайăн, Францин, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Англин государство гимнĕсене каланă.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔН ПĔРРЕМĔШ ЛАРĂВĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 31-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Америка делегацийĕн пуçлăхĕ Том Нейл сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Пирĕн правительство Аргентинăна Пĕрлешнĕ нацисен организацине илме пулăшнăшăн эпир питĕ пăшăрханатпăр», тенĕ. Том Нейл Аргентинăра демократиллĕ правительство тумашкăн пур майсемпе те пулăшма чĕннĕ.

Совет делегацийĕн пуçлăхĕ Н. А. Михайлов сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Пĕрлешнĕ нацисем тăшмана çĕнтерес ĕçе Совет Союзĕ пуринчен те ытларах вăй-хал хурса пулăшнине халĕ ĕнтĕ пурте йышăнчĕç. Çавăн пирки те малта пыракан этемлĕх совет халăхĕн пуçлăхне, асларан та аслă полководецпа—Сталин юлташа çав тери пысăка хурса хисеплет», тенĕ. Вăл Франкопа, Салазарпа тата Фаррельпе килĕшмесĕр тăракан демократиллĕ правительствăсене пурне те пулăшса пыма чĕннĕ.

Англи делегачĕ Брюс Винсент ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сессийĕ ăнăçлă пĕтменшĕн хурланса каланă.

ЯПОНИ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ КОМИССИЙĔН ЛАРĂВНЕ ТЕПĔР ВĂХĂТА ХĂВАРНĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Консультаци комиссийĕн вăхăтлăх председателĕ Маккой çапла пĕлтернĕ: Китай посолĕ Вей Дао-мин сĕннипе, комисси ларăвне пĕр эрнерен уçатпăр, тенĕ.

Комисси членĕсем пухăнса çитсен, Бирнс комисси членĕсене комиссин вăхăтлăх председателĕпе Вей Дао-минпа паллаштарнă, унтан комиссин штачĕ çинчен пĕлтернĕ, вара Вей-Дао-мин комисси ларăвне пĕр эрнерен уçма сĕннĕ. Филиппин представителĕ Ромуло çав сĕнĕве ырланă. Австрали представителĕ Эватт çапла каланă: эпĕ комисси ларăвне уçассине тепĕр вăхăта хăварнине хирĕç мар, анчах та комисси ĕçĕн анлăшне кирек хăш енчен те улăштарни ытти çĕршывсем комиссире ĕçлеме килĕшнĕ условисене те улăштарать. Çавăнпа та çавăн пек улшăнусем çинчен çав çĕршывсене малтанах каласа парас пулать, тенĕ. Франци представителĕ Наджиар та Вей Дао-мин сĕнĕвĕпе пĕтĕмĕшпех килĕшнĕ. Вара, хирĕç калакан пулман пирки, Миккой çапла каланă: Вей Дао-мин сĕнĕвне йышăнса, комисси ларăвне уçассине тепĕр вăхăта хăваратпăр, тенĕ.

ЯПОНИЕ КОНТРОЛЛЕСЕ ТĂРАКАН ОРГАН ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 30-мĕшĕнче Вашингтонра Япони тĕлĕшпе ĕçлекен Консультаци комиссийĕ ĕçлеме тытăнмалла пулнă (кун çинчен маларах пĕлтернĕччĕ). Комисси ĕçне чылай государствăсен представителĕсем хутшăнмаллаччĕ. Консультаци комиссийĕн малтанхи ларăвĕнче çапах та çапла йышăннă: комисси ĕçлеме пуçлассине тата тепĕр эрнене хăварас, тенĕ.

Çак ыйту пуриншĕн те ăнланмалла пултăр тесе, çакна астутарас пулать: хальхи вăхăтра Совет Союзĕ Япони тĕлĕшпе ĕçлекен Консультаци комиссийĕн че тăмасть, çав комисси хăйĕн ларăвне чĕнсе янă хута салатас ĕçе те вăл хутшăнман.

Совет правительстви Консультаци комиссине тăвас ыйтăва Японие контроллесе тăракан органа тунă хыççăн татса пама тивĕçлĕ тесе шутлать. Совет правительстви шутланипе, Японие контроллесе тăракан органа тăватă державăн представителĕсенчен туса хумалла. Вăл державăсем çаксем: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем. Великобритани. Совет Союзĕ тата Китай. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен представителĕ çав органăн председателĕ пулмалла.

ЛУИДЖИ ЛОНГО РЕПАРАЦИ ÇИНЧЕН КАЛАСА ПАНИ

РИМ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Италири канашлу пухăвĕн ют çĕршыв ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин членĕ Луиджи Лонго «Унита» хаçат представительне фашистла Итали вăрçăра ют çĕршывсене кÿнĕ сиенсене тÿлесси çинчен каласа панă. Лонго çапла каланă: ют çĕршыв ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин ларăвĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ де Гаспери хăйĕн докладĕнче çапла каларĕ: «Ман шутăмпа, Совет Союзĕ хăйне кÿнĕ сиенсемшĕн шыраса илме требовани кăларса тăратма пултарать. Совет Союзĕн шухăшне Итали правительстви пĕлмест-ха, анчах та СССР Финляндирен, Румынирен тата ытти çĕршывсенчен те репараци шыраса илмелле турĕ. Хаçатсенче çырнă тăрăх тата тĕрлĕрен майпа килнĕ хыпарсем тăрăх, —терĕ де Гаспери,—Совет Союзĕ 600 миллион доллар шыраса илме шутлать пулать, ку шута Балканри çĕршывсене тÿлемелли репараци те кĕрет». Çĕнтерÿ тунă ытти çĕршывсене илсен, тенĕ Лонго, Итали ку вăхăта çитиччен Англипе США-на 200 миллиард лирлăх (2 миллиард долларлăх) тĕрлĕрен япаласемпе пурлăх панă.

Лонго тата çакна палăртнă: Бирнс каланă тăрăх, Италин мирлĕ вăхăтра усă курма май килмен çар материалĕсемпе промышленность оборудованине союзниксене памалла. Италин ют çĕршывсенчи пурлăхне союзниксем туртса илме хăтланнине вара Лонго «чи пысăк тĕрĕсмарлăх», тенĕ.

Лонго çапла шутлать: союзниксем Италирен репараци шыраса илме шутлаççех пулсан, Италин вара репараци суммине кăтартса пама ыйтмалла, вăл суммăна союзниксен хăйсем хушшинче пайламалла. «Паллах, ку суммăна союзниксем ку таранччен илнĕ пур пурлăх та кĕмелле».

ТАСС асăрхаттарни: Луиджи Лонго каласа пани çинчен çырнă май, çакна аса илтермелле: Италипе мирлĕ договор тăвас ыйтăва Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Совечĕн Лондонри сессийĕнче пăхса тухнă. Унта совет делегацийĕ çапла сĕнÿ панă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Великобритани репараци суммин хăйсене тивĕçекен пайне илме килĕшмесçĕ пулсан, Совет Союзĕ вара СССР, Югослави, Греци тата Албани валли Италирен 300 миллион доллар репараци шыраса илнипе килĕшет. Çак шыраса илнĕ суммăран 100 миллион доллар Совет Союзне пулмалла. Çапла ĕнтĕ Совет Союзĕ Италирен шыраса илме палăртнă репараци сумми, Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен панă япаласемпе пурлăхсен хакĕпе танлаштарсан, питех те пĕчĕккĕ.

КĔСКЕН

* Софи хулинчи чи лайăх кинотеатрсенчен пĕринче «Богдан Хмельницкий» ятлă совет фильмне иккĕмĕш эрне кăтартаççĕ ĕнтĕ. Çав фильма Софи халăхĕ питĕ юратса пăхать. Ăна пĕр эрне хушшинче кана 20 000 çынна яхăн кайса курнă.

Египетри хаçатсем Египетăн нациллĕ ыйтăвĕсем çинчен

КАИР, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 27-мĕшĕнче «Аль-Кутля» хаçатра Египетăн нациллĕ ыйтăвĕсем çинчен статья пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Политика тĕлĕшĕнчен илсе пăхсан, Египета ют çĕршыв çарĕсем оккупацилесе тăма нимĕнле сăлтав та çук. Ку тĕлĕшпе çакăн пек чухне çеç ют çĕршыв çарĕсем тепĕр çĕршыва оккупацилесе тăма пултараççĕ: 1) оккупациленĕ çĕршыв мĕнле те пулин урăх çĕршывпа вăрçать пулсан, 2) вăрçăра вăл парăннă пулсан е 3) вăл ют çĕршыва пăхăнса пурăнать пулсан. Çаксем пĕри те çук пулсан, никама пăхăнманлăхне йышăннă çĕршыва оккупацилесе тăма нимĕнле сăлтав та çук. Англипе Египет хушшинчи договор та Египетăн никама пăхăнманлăхне хăшпĕр енчен хĕснине Египет вăхăтлăх условисем тесе йышăнма килĕшнĕ». Хаçатра çапла çырнă: «Египет хăйĕн никама пăхăнманлăхне хăех тытса тăма, тĕнчери хăрушсăрлăха организацилес ĕçе хутшăнма пултарать. Вăл хăйĕн пĕтĕм тĕнче умĕнчи обязательствисене пурнăçа кĕртсе пымашкăн çар вăйĕсем тума пултарать. Англипе Египет хушшинчи договорта ют çĕршыв çарĕсене Каирпа Александрирен çеç илсе тухса каймалла, вĕсене канал зонинче хăвармалла, тенĕ. Çак вăрçăра Египет тунă жертвăсемпе çакă инепле те пĕтĕçсе пыма пултараймасть».

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЧИ ĔÇСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 31-мĕшĕнче ирхине Лондонри радио союзниксен Ява утравĕ çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕн штабĕ пĕлтернине панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Англи çарĕсен командующине Ява утравĕ çинчи Сурабайя хулинче вĕлернĕ, тенĕ.

Англи çарĕсен командующийĕ Сурабайя хулинче восстани тăвакансен пуçлăхĕпе Сойкарнопа калаçнă пулнă, вара октябрĕн 30-мĕшĕнче перемири çинчен килĕшÿ тунă. Çапах та Сурабайăра тытăçусем пĕтмен.

БРАЗИЛИРИ ĔÇСЕМ

САН-ФРАНЦИСКО, октябрĕн 30-мĕшĕ (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио çапла пĕлтерет: Бразилирен илнĕ хыпарсем тăрăх, октябрĕн 30-мĕшĕнче çĕрле правительствăн Рио-де-Жанейро хулинчи пур радиостанцийĕсем те ĕçлеме пăрахнă. Вара хулана танксем кĕнĕ, вĕсем хыççăн пехота çарĕсем кĕнĕ. Çав çарсем хулари стратеги тĕлĕшĕнчен паха пунктсене тата правительство çурчĕсене йышăннă.

Бразили президенчĕ Варгас вырăнтан тухнă, вăл президент ĕçĕсене Бразилин Верховнăй сучĕн пуçлăхне Линьяреса панă, мĕншĕн тесен, Бразили конституцийĕ тăрăх, президент вилсен е вăл вырăнтан тухсан, президент влаçне Верховнăй суд пуçлăхĕн аллине памалла.

Рио-де-Жанейро хулинчен çитекен хыпарсем тăрăх, Бразили столицинчи хумханусем унти политикăллă икĕ парти пĕр-пĕринпе хирĕçнинчен килеççĕ. Ĕçсем мĕнле пулса пыни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ хыпарсем ку таранччен пачах та çук. Юнайтед Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Рио-де-Жанейро хули урамĕсенче çапăçусем пыраççĕ. Çапла шутлаççĕ: çав çапăçусенче пĕр енче Варгас правительствин çарĕсем çапăçаççĕ, тепĕр енче декабрь уйăхĕнчи президент суйлавĕнче Варгаса хирĕç хăйĕн кандидатне тăратнă çыннăн хĕçпăшаллă отрячĕсем çапăçаççĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 30-мĕшĕнче каçхине Рейтер агентствин корреспонденчĕ «Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пĕлтернĕ: вырăнтан тухнă Варгас президент хăйĕн полномочийĕсене Верховнăй суд пуçлăхне панă хыççăн ăна Гуонавар дворецĕн çар хуралĕ аллине панă.

МОНТЕВИДЕО, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пĕлтерет: Верховнăй суд пуçлăхĕ Линьярес доктор октябрĕн 30-мĕшĕнче президент пулма кандидата тăратнă Дутра тата Гомес генералсемпе, çавăн пекех тата çар министрĕпе Гоэс Монтейропа канашланă. Октябрĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Линьярес президент обязанноçĕсене туса пырас ĕçе йышăннă.

МОНТЕВИДЕО, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пĕлтерет: Бразилин пĕрремĕш çар округĕн штабĕ саракан хыпарсем тăрăх, Рио-де-Жанейро хулинче коммунистсен партийĕн комитечĕ çурчĕсенче документсем нумай тытса илнĕ, унсăр пуçне тата «хĕçпăшал та тупнă» пулать.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви Рио-де-Жанейро хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Бразили салтакĕсем коммунистсен «Трибуна популар» хаçатăн редакцийĕн çуртне йышăннă.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 30-мĕшĕнче Эллайд Лейбор ньюс агентстви çапла пĕлтернĕ: Бразилире коммунистсен партийĕн пуçлăхне Престеса тытса хупнă.

МЕКСИКĂРИ РАБОЧИСЕН КОНФЕДЕРАЦИЙĔ КАЛАНИ

МЕКСИКО, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Мексикăри рабочисен конфедерацийĕ Фарель—Перон режимĕ Аргентина халăхне хĕсĕрленине хирĕç çырнă çыру пичетлесе кăларнă.

Çырура çапла каланă: Аргентинăра пулса иртекен ĕçсем «Латинла Америкăри ытти çĕршывсенчи мирпе канлĕхе хăратса тăраççĕ. Аргентинăри лару-тăру инкçанхинчен те хăрушланса çитнĕ. Аргентина халăхне улталарĕç. Фарельпе Перон нацистсен тактикине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Аргентинăри рабочисем пĕлтерни çине кăтартса, Мексикăри рабочисен конфедерацийĕ çапла калать: Фарельпе Перон юлашки вăхăтра туса ирттернĕ ĕçсене «Аргентинăри мĕнпур ирĕклĕ çынсене, уйрăмах та рабочисен организацийĕсемпе вĕсен руководителĕсене, ытларах хĕсĕрлес тесе çеç туса ирттернĕ».

АРГЕНТИНА ДЕЛЕГАТНЕ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ĔÇ БЮРОВĔН КОНФЕРЕНЦИНЕ КĔРТМЕЛЛЕ МАР ТУНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи тата Франци рабочийĕсем суйласа янă делегатсем хирĕç тăнине пула, Пĕтĕм тĕнчери ĕç бюровĕн конференцийĕн мандат комиссийĕ, пĕрсаслăн пулса, Аргентинăри рабочисен делегатне Хуан Родригеса Пĕтĕм тĕнчери ĕç бюровĕн конференцине кĕртес мар тесе йышăннă. Çав конференцие Аргентина правительстви янă делегацие кĕртессипе кĕртес маррине татса паман-ха.

АМЕРИКĂРИ ДЕЯТЕЛЬСЕМ ДОМИНИКАН РЕСПУБЛИКИНЧЕ ФАШИСТСЕМПЕ КĔРЕШЕКЕН ÇЫНСЕНЕ ХĔСĔРЛЕНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Пĕтĕм Америкăри демократишĕн кĕрешекен совет» ятлă прогрессивнăй организаци çапла пĕлтернĕ: Доминикан республикинче фашистсемпе кĕрешекен çынсене хĕсĕрленине хирĕç çак кунсенче 66 паллă американец протестленĕ. Вĕсем çапла тума ыйтаççĕ: Трухильо президентăн политика пирки тытса хупнă çынсене ирĕке кăлармалла, çĕршывран кăларса янă çынсене каялла таврăнма ирĕк памалла, демократиллĕ партисене çĕнелле йĕркелеме май памалла тата конституциллĕ правăсене çĕнĕрен законлă туса хумалла.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Куба столицинче Гавана хулинче тухакан «Ой» хаçат çак кунсенче çапла пĕлтернĕ: нумаях пулмасть Доминикан республикинче интеллигенцин, студентсен, профессорсен, профсоюз лидерĕсен тата прогрессивнăй ытти деятельсен нумай представителĕсене тытса хупнă, çав çынсем демократиллĕ правительство туса хума чĕннĕ пулнă.

ЯПОНИ ИМПЕРАТОРĔН ПУЯНЛĂХĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Токиори хаçатсем Япони императорĕн пуянлăхĕ çинчен даннăйсем пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çапла çыраççĕ: 1942 çулта Хирохито императорăн хаклă хутсем пĕр миллион кĕренке стерлинг чухлĕ пулнă. 1940 çулта унăн 3 миллион акр çĕр пулнă, çав çĕртен вăл çулленех 600.000 кĕренке стерлинг тупăш илсе тăнă.

ЭТТЛИ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 30-мĕшĕнче Англи премьер-министрĕ Клемент Эттли общинăсен палатинче çапла каланă: эпĕ часах Вашингтона каятăп, унта Трумэн президент патĕнче пулатăп, вара унпа тата Канада премьер-министрĕпе пĕрле эпир атом вăйĕпе усă курасси çинчен сÿтсе-яватпăр, тенĕ.

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

„Сĕнтĕрвăрри мыскари"

Кăçал сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Сĕнтĕрвăрри мыскари» ятлă фельетон пичетленсе тухнăччĕ. Вăл фельетонра Сĕнтĕрвăрринчи Колхозник çурчĕпе хулари мунчари тата соцкультура çуртĕнчи çитменлĕхсем çинчен çырнăччĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомĕнчен çырса пĕлтернĕ тăрăх, фельетонра çырнă фактсем пурте тĕрĕс пулнă.

Райсовет исполкомĕ фельетонра палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăннă. Соцкультура çурчĕн директорне Карский юлташа япăх ĕçленĕшĕн ĕçрен кăларнă. Хула коммунхозĕн заведующийĕпе хулари мунча заведующине вĕсем хăйсен ĕçне кирлĕ пек туса пыманни çинчен асăрхаттарса хăварнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ял хуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00294 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59.42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.